Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

38 (8104) № ✻ Шăмат кун, 2013 çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕн 1-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Паян – Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун

## Ачалăх – савăнăçлă вăхăт

**Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун пире пурне те ачасен прависем çинчен кăна мар, ачасем тăнăçлăхра, юратура ӳсмеллине те аса илтерет. Ача тата амăшлăх ыйтăвне патшалăх хальхи вăхăтра тĕп енсенчен пĕри тесе палăртни те ахальтен мар – пуласлăх çакăнпа çыхăннă.**

**Паян кашни амăш ача çуратнăшăн пĕр хутчен паракан пособие тивĕçет – 13 пин тенкĕ ытла. Ачана çул талăк çурăччен пăхнăшăн паракан пособи, уйăхсерен парса тăракан ача-пăча пособийĕ (районта 1900-е яхăн çемье илсе тăрать), Раççей тата республика шайĕсенчи амăш капиталĕсем, кăçалтанпа тата пурăнмалли чи пĕчĕк виçепе танлашакан компенсаци тӳлевĕ те пур. Çак компенсаци тӳлевне 2013 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен виççĕмĕш е хыççăнхи ача çуратнăшăн çемьере пĕр çынна тивекан тупăш пурăнмалли чи пĕчĕк виçерен сахал тупăшлă çемьесем тивĕçеççĕ. Компенсацие (хальхи вăхтра вăл 5 пин тенкĕ ытларахпа танлашать) ача виçĕ çул тултариччен тӳлеççĕ.**

**Патшалăх пулăшăвĕ пулнăран нумай ачаллă çемьесем те хушăнса пыраççĕ. Акă 3 ачаллă çемьесем районта пурĕ 350; 4 ачалли – 53; 5 ачалли – 13; 6 ачалли – 1; 8 ачалли – 1. Пурĕ вара районти нумай ачаллă 418 çемьере 1359 ача ӳсет. Вĕсем тĕрĕс-тĕкел ӳсчĕр тесе патшалăхăн кăна мар, ашшĕ-амăшĕн те ытларах тăрăшасчĕ.**



*Мăн Сĕнтĕрти «Мечта» ача-пăча садне çӳрекен ачасен ăс-тăнпа тавра курăма аталантарма майсем çителĕклĕ: тĕрлĕ ĕç пурнăçлаççĕ вĕсем. Валентина Казакова воспитатель (сăн ӳкерчĕкре хыçалта) пулăшнипе, унăн тĕслĕхне курса шăпăрлансем спортпа туслашма та ĕлкĕрнĕ. «Мечта» садика çӳрекенсем пĕлтĕрхи «Малышиадăра» район çĕнтерӳçисем пулса тăнăччĕ. Кăçал та хăйсен правурлăхĕпе палăрчĕç – çĕнтерчĕç.*

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

### ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!

Сире çак çутă та паллă уявпа – Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кунпа чунтан саламлатăп. Ахăртнех, ăна çĕртме уйăхĕн пĕрремĕш кунĕнче паллă туни те ахальтен мар-тăр, вăл хаваслă çу тата ачасем тахçантанпах чăтăмсăррăн кĕтекен кунĕсем пуçланнине систерет.

Ача – çыннăн чи хаклă пуянлăхĕ. Пирĕн шанчăкăмăр, шухăшсемпе ĕмĕтсем çитĕнекен ăрупа тачă çыхăннă. Раççейпе Чăваш Ен пуласлăхĕ те шăпах унран килет.

Пирĕн республикăра ача амăшĕпе ачалăх институтне çирĕплетесси патшалăх политикин тĕп çул-йĕрĕсенчен пĕри пулса тăрать. Медицина пулăшăвĕн пахалăх шайĕ ӳсет, ача çуратмалли çуртсене хальхи йышши хатĕр-хĕтĕрпе пуянлатнă, иккĕмĕшпе виççĕмĕш тата ун хыççăнхи ачасем çуралсан пурлăх енчен пулăшу памалли программăсем пурнăçланаççĕ.

Юлашки 20 çул хушшинче республикăра пуçласа ача сачĕсем тума тытăннă тата 2015 çул тĕлне эпир шкулччен ача-пăча учрежденийĕсенчи черет ыйтăвне туллин татса пама палăртатпăр.

Йышăннă мерăсене пула Чăваш Енре нумай ачаллă çемьесен йышĕ ӳсрĕ. 2012 çулта, юлашки çирĕм çул хушшинче каллех пуçласа, республикăра халăх хăй халлĕн ӳснине шута илнĕ.

Правительство ачасем çирĕп сывлăхлă ӳсчĕр, паха пĕлӳ илчĕр, вĕсене спортпа туслашма пултарулăх енĕпе ĕçлеме мĕн пур май пултăр, ăс-хакăлпа кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен йĕркеллĕ аталанччăр тесе мĕн кирлине пурне те тума тăрăшать. Чăваш Ен ачисем лайăх çынсем пулса çитĕнессе, пурнăçра пысăк çитĕнӳсем тума пултарасса, хамăр çуралса ӳснĕ çĕре тата та илемлĕрех те пуянрах тăвасса шанса тăратăп.

Республикăра пурăнакансене пурне те çирĕп сывлăх, ырă шанăç, харпăр хăйĕн вăйне шанма, юрату, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Ен Пуçлăхĕ М. ИГНАТЬЕВ.**

### ХАКЛĂ АЧАСЕМ ТАТА АШШĔ-АМĂШĔСЕМ!

Сире Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Ачалăх кашни çыннăн пурнăçĕнче тарăн йĕр хăварать, ĕмĕрлĕхех асра юлать. Малашлăх мĕнле пуласси те çак нихăçан манăçми пурнăç тапхăрĕнчен нумай килет. Çавăнпа та ача каярахпа пурнăçра хăйĕн вырăнне туптăр тесен пирĕн, çитĕннисен, хамăртан килнине йăлт тумалла. Ăна мĕн пĕчĕкрен пурнăç илемне курма, кирек епле лару-тăрура та ыррине, лайăх енне суйласа илме хăнăхтармалла. Çакăн пек чухне вăл нимĕнле йывăрлăх умĕнче те çухалса каймĕ. Апла пулсан пирĕн, ашшĕ-амăшĕсен, воспитательсен, вĕрентекенсен вĕсене юратмалла, вĕсем çакна туйччăр тесе тăрăшмалла. Тăван тавралăх илемĕ, тăван район аталанăвĕ кашни çынран килнине мĕн пĕчĕкренех курса-туйса ӳсчĕр вĕсем. Чи малтан вара хамăрăн вĕсемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăмалла. Вара пирĕн ачасен пуласлăхĕшĕн те пăшăрханмалла пулмĕ.

Чăваш Республикин, РФ Правительствисем ачаллă çемьесене пулăшас тĕллевпе нумай ĕç тăваççĕ. Çакă чылай çемьене çăмăллăх парать. Анчах та пирĕн, ашшĕ-амăшĕсен, ачасене хамăршăн çуратнине, вĕсен пуласлăхĕшĕн хамăр яваплине асрах тытмалла. Вĕсене ĕçе хăнăхтарса ӳстермелле, аслисене хисеплеме, яваплăха туйма вĕрентмелле. Атте-анне килĕ вĕсене ĕмĕр тăршшĕпех вăй парса тăтăр, яланах чун туртнă вырăн пултăр тесе халех тăрăшмалла.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, телейлĕ вăрăм кун-çул сунатăп. Çулăрсем уçăлсах, ĕçĕрсем ăнсах пыччăр. Ĕмĕр тăршшĕпех ачăрсемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. ТИМОФЕЕВ.**

Сăмах – район администрацийĕн ĕçченĕсене

## «Кашни тенкĕрен тенкĕ çурă тупăш илесчĕ»

*Районта çурхи уй-хир ĕçĕсем вĕçленнĕпе пĕрех. Çавăнпа пĕрлех улăх-çаранти курăк ӳссе кайни «симĕс ĕç çи» алăкран шакканине пĕлтерет. Мĕнле шухăш-ĕмĕтпе пурăнать тата ĕçлет паян ял ĕçченĕ? Çак ыйту çине хурав тупас тĕллевпе район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕпе – АПК аталанăвĕпе экономика тата муниципаллă харпăрлăх управленийĕн пуçлăхĕпе В. АНАНЬЕВПА çыхăнтăмăр.*



**– Владислав Кириллович, çурхи кун çулталăк тăрантарать. Районти çĕр ĕçченĕшĕн çур аки хыçа юлса пынă май унăн малтанхи пĕтĕмлетĕвĕ пирки мĕн калайратăр? Шухăшлани-ĕмĕтленни пурнăçа кĕчĕ-и?**

– Район ял хуçалăх ĕçĕпе специализациленнĕрен çур акипе кĕр аки, «симĕс ĕç çипе» вырма Муркаш тăрăхĕнче пурăнакан кашни çыншăн пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа хамăр яваплăха туйса ĕçлесе пыма тăрăшатпăр. Çĕр-шыв программисемпе туллин тата вырăнлă усă курасси – пирĕн паян пĕрлехи тĕллев.

Хресчен ĕçĕн тĕллевĕ çĕр-аннемĕре хуçасăр тата пушă вырттарас марри. Çиччĕ виçсе вăй хурсан вăл ĕçлекен çынна тăрантарать, тупăшпа савăнтарать. Тухăç пысăк пулсан хуçалăх та тĕрекрех, район та пуянрах. Çакна шута илсе ял хуçалăхĕнчи кашни ĕç хыççăнах туса ирттернине пуç тавра çиччĕ çаврăрса пĕтĕмлетӳ тума тăрăшатпăр. Çакна районти малашлăха пăхакан кашни хуçалăхрах çирĕп кун йĕркинче тытаççĕ.

Çур акине палăртнă вăхăтрах ирттертĕмĕр. Ăна тĕплĕ хатĕрленнĕ пĕрлешӳллĕ тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсем паянхи куна 10737 гектар шуратса хăварчĕç. Уй-хир ĕçĕсем кăçал уйрăмах «Герой», Ильич яч. хис., Е. Андреев яч. хис, «Свобода», Суворов яч. хис., Чкалов яч. хис., «Оринино» пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе «Путь Ильича» агрофирмăра, «Бездна» обществăра, А. Толстов, В. Горбунов, А. Пихтеров, С. Сретинский хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче кал-кал иртрĕç. «Ударник» хуçалăх та умри йывăрлăхсене çĕнсе палăртнă лаптăксене пĕтĕмпех шуратса хăварма мехел çитерчĕ. Çакă савăнтарать, шанчăк çуратать.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

Конкурс

## Пултарулăха уçса пама

«Раççей пуласлăхĕ» ассамблея фестивале хутшăнакансенчен заявкăсем йышăнма пуçланă. Унта ача çурчĕсенче, интернат шкулсенче, приютсенче пурăнакан 6–18 çулхи ачасемпе çамрăксем хутшăнаççĕ. Çак конкурса хутшăнса уйрăммăн та, коллективпа та, вĕсем хăйсен пултарулăхĕпе (хăйсен сăввине-юррине, спектакль сценарийĕсене, фильмсене тата ыттине те) паллаштарма пултараççĕ.

Заявкăсене июлĕн 15-мĕшĕччен çак электрон адрессемпе йышăнаççĕ: info@budros.ru, budros@bk.ru. Фестиваль Мускавра октябрь уйăхĕнче иртет.

Каласа хăвармалла, Чăваш Республикин вĕренӳ министерствин даннăйĕсем тăрăх пирĕн республикăра пурĕ 4500 тăлăх е ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнă ача. Çулсеренех Чăваш Енре 500-е яхăн ача ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлать, вĕсенчен 80 процент ытла ашшĕ-амăшĕ пур çинчех «социаллă тăлăх» шутланать.

Кĕскен

## Пулăшу – хевтесĕррисене

Республикăра «Подари компьютер: мы ЗА! Равные возможности!» ыр кăмăллăх акцийĕ малалла пырать. Акцие сывлăх тĕлĕшĕнчен хевтесĕррисем валли компьютер туянма укçа-тенкĕ пухас тĕллевпе Чăваш Ен наци библиотеки пĕлтĕр декабрьте пуçарнă. Йĕркелӳçĕсем пурне те çак акцие активлă хутшăнма ыйтаççĕ.

Укçа куçарма ятарлă счет уçнă. Счетпа аппаланас мар текенсен укçана, çавăн пекех компьютер техникине те библиотекăри маркетингпа инновацисен уйрăмне пырса пама пулать. Ыйтса пĕлмелли телефон номерĕ: 62-38-12.

«Евровидени – 2013»

## Настьăшăн сасăлар!

Ыран ача-пăча юррисен «Евровидени – 2013» конкурсăн финалĕ иртет. Çак конкурсра чăваш хĕр ачи – Кӳкеç лицейĕнчи 8 класра вĕренекен Анастасия Егоркина та куракансене хăйĕн юррипе паллаштарать.

Финала «Россия-2» телеканалпа 10 сехет те 25 минутра кăтартаççĕ. Апла пулсан Настьăшăн смс-хыпар ярса сасăлар!

Çырăнтару – 2013

## Çырăнмасăр ан юлăр!Васкăр!

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата иккĕмĕш çур çулта илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Хаçата 6 уйăха çырăнмалли хак – 216 тенкĕ те 30 пус.**

**Хаклă вулаканăм! Малашне те пĕрле пулăр!**

# Пушкăртпа чăваш – çывăх хурăнташ

Пушкăрт Республикин Чăваш Енри кунĕсем



***Пушкăртсемпе чăвашсем хушшинчи туслă çыхăнусем çултан-çул çирĕпленсех пыраççĕ. Иртнĕ çул Чăваш Республикин кунĕсем пушкăрт çĕрĕ çинче иртнĕччĕ. Кăçал вара майăн 30 – 31-мĕшĕсенче Пушкăрт Республикин кунĕсене пирĕн патра йĕркелерĕç. Çавна май Чăваш Енре Пушкăрт Республикин Президенчĕ Рустэм Хамитов ертсе пыракан делегаци пулчĕ. Майăн 30-мĕшĕнче Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче Рустэм Хамитовпа Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Пушкăрт Республикин Чăваш Енри кунĕсене официаллă уçнин мероприятине хутшăнчĕç, сăмах каларĕç.***

***Çак кунсенче пирĕн республикăра пушкăртсен пултарулăх ушкăнĕсем те пулчĕç, республика тĕп хулинче, районсенче пулса вĕсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç.***

***Пирĕн районта вара аякри тăвансен «Сарпи» эстрадăпа фольклор ушкăнĕ пулчĕ, майăн 29-мĕшĕнче вăл районти культурăпа кану центрĕн сцени çинче хăйсен таши-юррипе савăнтарчĕ. Ăшă кăмăлпа йышăнчĕç Муркашсем хăнасене. Каласа хăвармалла, «Сарпи» – Пушкăртстанри пĕрремĕш професси чăваш коллективĕ. Ăна 1999 çулта йĕркеленĕ.***

***Концерт умĕн вара хăнасем тури чăвашсен районти музейĕнче пулса курма ĕлкĕрчĕç. Пушкăртсене унта район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ Елена Чернова кĕтсе илчĕç. Хăнасем музей экспоначĕсемпе интересленсе паллашрĕç. Хыççăн çавра сĕтел хушшинче пухăнса пĕр-пĕрин ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрĕç. Ростислав Николаевич хăнасене асăнмалах «Моргаушский район: традиции, обряды, праздники» кĕнеке парнелерĕ.***

***Туслă çыхăнусем, пĕр-пĕрин патĕнче пуласси, пĕр-пĕрин ĕçĕ-хĕлĕпе паллашасси, пĕрле савăнасси – пĕр кунлăх япала мар. Вăл вĕçĕмех çапла. Республикăсен делегацийĕсен, уйрăм коллективсен, пултарулăх ушкăнĕсен çирĕп хутшăнăвĕ – малашлăх аталанăвĕн çирĕп никĕсĕ.***

**Пушкăрт Республикин Чăваш Енри кунĕсем умĕн Орининти ветерансен халăх хорĕ Пушкăрт Республикинчи чăвашсем патĕнче пулчĕ, К. Иванов çуралнă, Ухсай Яккăвĕ пурăннă вырăнсене çитсе курчĕ. Ун пирки асăннă хор участникĕ Р. Иванова каласа парать:**

– Çул çӳрев кĕске мар. Акă Пушкăрт çĕр-шывĕнчи Пелепей районне çитсе пыратпăр. Ку район Слакпуç ялĕпе паларса тăрать. Кунта чăваш литературин классикĕ К. Иванов çуралса ӳснĕ, кунтах чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ кун çути курнă.

Пирĕн ушкăна Слакпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ О. Беляев кĕтсе илчĕ. Чăвашла таса та тĕрĕс калаçни тӳрех пирĕн кăмăла çемçетрĕ. Вăл пире ял историйĕпе кĕскен паллаштарчĕ. Унтан К. Ивановăн музей çуртне çитсе курма сĕнчĕ. Музейра пире О. Егорова кĕтсе илчĕ. Асăннă çурта 1906 çулта К. Иванов проекчĕпе лартнă пулнă. Акă тăваткалласа касса кăларнă чултан купаланă. Пĕр ĕмĕр ытла çак çурт чиперех сыхланса юлнă. Музей умĕнче К. Иванов лартнă йывăç халĕ те чиперех ешерет.

Музейра экспонатсем питĕ нумай. К. Иванов портречĕ, тĕрлĕ художниксем ӳкернĕ «Нарспипе» çыхăннă картинăсем, К. Иванов хăй кăмрăкпа ӳкернĕ ӳкерчĕксем (ашшĕ, амăшĕ т. ыт. те), авалхи çи-пуç, ĕç хатĕрĕсем, К. Иванов пӳлĕмĕнчи унăн вырăнĕ, вилсе кайнă саманта кăтартакан сехет, хăй аллипе ăсталанă шкаф, тĕрлĕ ӳкерчĕксем...

Музее хирĕç илемлĕ ешĕл хурăнсемлĕ парк. Паркра К. Ивановăн вил тăприйĕ, палăкĕ, «Нарспи» поэмăри сăнарсен кĕлеткисем. Тата ытти те нумай.

Слакпуç ялĕнчех тепĕр паллă çын, чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ çуралнă (вăл К. Ивановăн 3-мĕш сыпăкри тăванĕ). Эпир Ухсай Яккăвĕн музей çуртне çитсе тăтăмăр. Ку музей та экспонатсенчен пуян иккен. Йывăç çурта паллă поэтăн икĕ хĕрĕ Ольга Яковлевнăпа Елена Яковлевна йĕркелесе тытса тăраççĕ иккен. Ухсай вилес умĕн хăйне тăван ял таврашĕнчи Кĕсле ту çине пытарма ыйтнă. Ку вырăн ялтан виçĕ çухрăмра. Унта та пулса куртăмăр.

Слакпуç тăрăхĕнче ĕлĕк-авалах чăнах та Силпи ялĕ пулнă. Вăл тĕппипех пĕтнĕ. Силпи юхан шывĕн çыранĕ тăрăх вырнаçнă ялăн вырăнĕ кăна сыхланса юлнă.

Силпирен Слакпуçне таврăннă май шкула та кĕрсе курас кăмăл çуралчĕ. Шкул директорĕ Ольга Иванова пире шкул историйĕпе, унти музейпа, шкул ĕçченĕсемпе паллаштарчĕ.

Çанталăк ăшă, уяр. Слакпуçĕнчи Культура керменне пĕрин хыççăн тепри çын утать. Часах зал халăхпа тулса ларчĕ. Концерта пуçлама та вăхăт. Малтанах Слакпуçĕнчи пултарулăх ушкăнĕ юрă янăратрĕ. Юрри чăн чăвашла, кĕвви те чăвашлах. Шкул ачисем ташăсем ташларĕç, сăвăсем каларĕç. Тумĕсем те вĕсен чăваш тĕррин эрешĕсемпе илемлетнĕ шурă çи-пуç.

Ветерансен «Оринен» хорĕ сцена çине тухсан халăх тăвăллăн алă çупса ячĕ. Чăвашсен авалхи йăлипе çăкăр-тăварпа, сăрапа, парнесемпе килсе çитнĕ хăнасене Слакпуç чăвашĕсем тăвана кĕтсе илнĕ пек кĕтсе илчĕç.

Юрă хыççăн юрă шăрантарчĕ, ташă хыççăн ташă парнелерĕ пирĕн ушкăн. Кашни номерех çынсем кăмăллăн алă çупса йышăнчĕç.

Уяв кунпах вĕçленмерĕ-ха. Концерт хыççăн Слакпуç хăнасене вăрман уçланкине пуçтарчĕ. Кунта вара мĕн ирчченех чăваш юрри янăрарĕ.

Çул çӳреврен тулли кăмăлпа, хамăр тавра курăма пуянлатса, аякри чăвашсене хисеп туса таврăнтăмăр эпир. Çул укçи те, парнисем те хамăр ушкăнранах пулчĕç пулин те, кăмăл пур-пĕрех тулли. Кайса курни хаваслантарчĕ, малашне татах кайса курас кăмăл хускатрĕ.

**Сăн ӳкерчĕкре: «Сарпи» ушкăн членĕсем Юрий Жуков композиторпа пĕрле.**

Республикăра

# Бюджетниксен ĕç укçи ӳсĕ

Майăн 29-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республика Министрсен Кабинечĕн черетлĕ ларăвне ирттернĕ. Ларура йышăну тунă. Чăваш Ен Пуçлăхĕн Указĕпе килĕшӳллĕн кăçал тапхăр-тапхăр январĕн 1-мĕшĕнчен, апрелĕн 1-мĕшĕнчен, июлĕн 1-мĕшĕнчен тата октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса бюджет сферинче ĕçлекенсен уйрăм категорийĕсен шалăвне ӳстерсе пырĕç.

Республикăра кăçал ĕç укçин вăтам шайĕ унччен пăхса хунинчен пысăкрах. Çавна май республика бюджетне улшăнусем кĕртме тивет. Бюджетниксене хушса тӳлеме 481 млн тенкĕ ытларах уйăрмалла пулать.

Ларура республика патшалăх пурлăхне приватизацилессин 2014 çулхи прогноз планĕ тата унăн 2015 – 2016 çулсенчи тĕп енĕсем пирки йышăну тунă.

Федерацин «Пурăнмалли çурт-йĕр» тĕллевлĕ программипе çамрăк çемьесене çурт-йĕр туянма уйăрнă укçа-тенкĕн 2012 çулхи усă курман пайне (2,7 млн тенкĕ) хăш-пĕр районсене валеçсе пама йышăннă. Вăл шутра Муркаш районĕ те пур.

Министрсен Кабинечĕ кăçалхи пĕрремĕш кварталти республикăри кашни çын пуçне тивекен пурăнма кирлĕ минимум виçине çирĕплетнĕ. Вăл пĕлтĕрхи 4-мĕш кварталтипе танлаштарсан 8,2 процент ӳснĕ, 5961 тенкĕпе танлашнă.

Ларура ытти ыйтусене те сӳтсе явса йышăнусем тунă.

# Ача сачĕсем çителĕклĕ пулмалла

Майăн 29-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççей премьер-министрĕ Дмитрий Медведев видеоконференци мелĕпе ирттернĕ канашлăва хутшăннă. Сăмах регионсенче ачасене шкулччченхи вĕренӳ учрежденийĕсемпе тивĕçтересси пирки пынă.

Раççей Правительствин Председателĕ палăртнă тăрăх кăçалхи майăн 1-мĕшĕ тĕлне ача сачĕсене 5,3 млн ача çӳренĕ. Ку вăл ачасен пĕтĕм хисепĕн 85 проценчĕ. 3 – 7 çулсенчи черет кĕтекен ачасем 572 пин. Дмитрий Медведев 2016 çул тĕлне хальхи лару-тăрăва тĕпрен улăштармалли пирки каланă. Çав тĕллевпе регионсене субсиди шучĕпе 50 млрд тенкĕ уйăрса пама пăхнă.

Республикăра ача сачĕсене кайма 2272 ача черетре. 2013 çулта 1795 вырăнлăх 11 ача сачĕ хута яма, 893 вырăнлăх 4 ача сачĕ тума тата реконструкцилеме тытăнма пăхнă. Çав тĕллевпе 507 млн тенкĕ уйăраççĕ.

2013 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне черетре тăракан 3 – 7 çулсенчи пур ачасене те, 1,5 – 3 çулсенчисене 60 процент ытла ача сачĕсенче вырăнсемпе тивĕçтерме палăртаççĕ.

Пурăнмалли çурт-йĕр



# Пулăшăва тивĕçрĕç

Эсир сăн ӳкерчĕкре Çатракасси ял тăрăхĕнче пурăнакан Ершовсен çамрăк çемйине куратăр. Кĕçнерни кун районти тепĕр 10 çемьепе пĕрле («Ялсен 2013 çулччченхи социаллă аталанăвĕ» федераллă программăна хутшăннă) вĕсен çемйине те пысăк, тахçанах кĕтнĕ савăнăç çитрĕ: вĕсем пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма май паракан субсидие тивĕçрĕç.

«Путене» ача-пăча садĕнче вăй хуракан Оксана Витальевна çамрăк специалист пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черете тăнă пулнă. Тивĕçнĕ тӳлевпе усă курса çамрăк çемье халĕ çĕнĕ пӳрт туса пĕтерме хатĕрленет. Оксанăпа Анатолий Ершовсен çемйинче икĕ ача ӳсет. Пулăшупа усă курса пӳрте хăт кĕртни вĕсемшĕн те питĕ пĕлтерĕшлĕ.

Пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма алла свидетельство илнисене район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеевпа унăн çумĕ В. Никитин та саламларĕç. Салам сăмахĕсемпе пĕрлех свидетельствăсене илнисен килĕшӳри тивĕçсене пурнăçламаллине те асăрхаттарчĕç: çамрăк специалистсен халĕ ĕçлекен вырăнта тепĕр пилĕк çултан кая мар ĕçлемелле. Патшалăх килĕшӳре палăртнă условисене пурнăçлать, апла пулăшупа усă куракансен те çакна хирĕç кайма кирлĕ мар. «Республикăра çакăн пек программăсене хутшăнса укçа-тенкĕ илнĕ, анчах та килĕшӳре палăртнă условисене пăснă тĕслĕхсем пур, пирĕн районта çынсем ответлăрах пуласса шанас килет. Эсир пурнăç условийĕсене лайăхлатса, вырăнта пурăнса ĕçлени район аталанăвĕшĕн те пĕлтерĕшлĕ. Район йĕркеллĕ аталанса пырсан вара тĕрлĕ программăсене хутшăнса пурнăç условийĕсене татах та лайăхлатма пулать», – çакна палăртса каларĕ Р. Тимофеев.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Сăмах – район администрацийĕн ĕçченĕсене

# «Кашни тенкĕрен тенкĕ çурă тупăш илесчĕ»

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)**

**– Паян тăтăшах çĕнĕлĕхсем пирки калаçнăран уй-хир ĕçченĕсем вĕсемпе усă курчĕç-и тата?**

– Палăртсах калатăп. Çĕнĕлĕхсенчен катара тăнă пулсан çакнашкал пысăк калăпăшлă ĕçе вăхăтра пурнăçлама пултараймăттăмăр. Кунта манăн энерги перекетлекен технологисемпе анлă усă курнисене ятранах асăнса хăварассăм килет. Вĕсем: Суворов яч. хис., Е. Андреев яч. хис., «Свобода» хуçалăхсемпе «Бездна» чикĕллĕ яваплăхлă общество. Асăннă хуçалăхсенче 8 метр сарлакăш культиваторсемпе усă курни ĕç хăвăртлăхне самай ӳстерчĕ. Çĕре хатĕрлессипе çĕр ĕç культурине пăхăнса ĕçсене икĕ-виçĕ хут пурнăçланисен çумсăр хирĕсене пăхсан çакăн усси куç умне туллин тухать.

Çĕнĕлĕхсем пирки калаçнă чух кăçал «Бездна» обществăра 100 гектар ытла вăрлăхлăх кукуруза акни, «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăпа А. Толстов хресчен (фермер) хуçалăхĕнче вăрлăх туса илме 300 гектара яхăн горчица акни пирĕн çĕр ĕçченĕ тăтăшах шыравра пулнине çирĕплетет.

**– Акнине пăхса ӳстересси те ответлă тапхăр...**

– Сирĕн шухăша ăнлантăм. Паян районти пур хуçалăхра майлах ку ĕçе малти вырăна кăлараççĕ. Хими имçамĕсемпе усă курса çум курăкĕпе вăхăтра кĕрешсе тухăça ӳстересси – çĕр ĕçченĕшĕн халĕ умра тăракан тĕп тĕллев. Ку ĕçе кăçал çур аки вĕçленипе пĕрлех «Оринино», «Свобода», ВаСем», «Герой», Чкалов яч. хис. тата А. Толстовпа А. Афанасьев хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче кӳлĕнчĕç. Кĕске хушăрах вĕсем çак ĕçе икĕ пин ытла гектар çинче туса ирттерчĕç. Паян ыттисем те çак ĕçе пуçăнаççĕ.

**– Çур аки вĕçленнипе пĕрлех хресчен умне тепĕр ответлă тапхăр тухать. Ку вăл – ут çи. Ăна хатĕрленесси еплерех пырать-ши?**

– Кашни хуçалăхрах çак ответлă тапхăра хатĕрленсе техникăна юсама пуçланă ĕнтĕ. Хăш-пĕр хуçалăхсенче ĕнесене кĕрхи культурăсем çулса çитерес ĕçе те пуçланă. Ку юхăм кунсерен вăй илсе пырĕ çеç. Çу кунĕсенче паха апат ытлă-çитлĕ янтăлани хĕллехи вăхăтра производствăна, выльăхсен сывлăхне тивĕçлĕ шайра тытма пулăшнине ялта пурăнакан кашниех аван ăнланать. Вĕсем ăнланни тата ыррине шанни пурнăça кĕрсе пытăрччĕ. Çур акире производствăна хывнă кашни тенкĕ кĕр çитсен тенкĕ çурăпа е ытларах виçепе каялла таврăнтăр тетпĕр эпир паян.

**– Çапла пултăр!**

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Юбилей

## Саламлатпăр



Хаклă та юратнă çыннăмăра – Шарпаш ялĕнче пурăнакан **Валентина Николаевна ВАСИЛЬЕВĂНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Сывлăху сирĕн çирĕп пултăр, утас çулу уçăлсах пытăр, ĕмĕрӳ вăрăм пултăр. Çемьере яланах тату пурнăç хуçалантăр. Юрату, килĕшӳ пĕр-пĕрне ăнланса пурăнма, ĕмĕт-шухăшсене пурнăça кĕртме пулăшса пытăр, вăй-хал патăр. Инкек-синкек вара сирĕнтен аякран ирттĕр. Телейлĕ пулăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕ, кинĕпе кĕрӳшĕ, Никитинсен, Петровсен, Скворцовсен, Антоновсен çемйисем тата пĕчĕк мăнукĕ Варенька.**

Семья Ефановых сердечно поздравляет **ЦВЕТКОВУ Зою Александровну**, проживающую в с. Юнга, с замечательным событием – 50-летним юбилеем.

Желаем творческих успехов,
Побольше праздничных деньков.
Пусть будет в доме больше смеха,
Веселых, озорных внучков.

Налук

# Çăмăллăхсемпе усă курăр

Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн транспорт, çĕр тата уйрăм çынсен пурлăхĕнчен илекен налуксем тĕлĕшпе налук çăмăллăхĕсем пăхнă.

Пурлăх налукĕн сумми налук ставкинчен, налук базинчен тата çăмăллăхсенчен тăрать. Уйрăм çынсенчен илекен кашни пурлăх налукĕн хăйĕн бази пур. Тĕслĕхрен, транспорт хатĕрĕшĕн – автомобиль хăвачĕ, çĕр участокĕшĕн – унăн кадастр хакĕ, капиталлă строительство объекчĕшĕн – инвентаризаци хакĕ.

Вăл е ку налук тĕлĕшĕпе çăмăллăха тивĕçекен граждансен категорийĕсем яланах пĕрешкел мар. Çавăнпа та налук тӳлекенĕн çăмăллăхсем пирки налук органне пырса ыйтса пĕлмелле. Çăмăллăхсене тивĕçекенсем хăйсемех налук органĕсене кирлĕ документсене тăратаççĕ. Документсене пурлăх е çĕр участокĕ вырнаçнă вырăнти налук инспекцине тăратмалла.

Çăмăллăхсемпе усă курма ирĕк пулсан çак ирĕк ĕçлеме пуçланă кунтан пуçласа çулталăк хушшинче налука çĕнĕрен шутласа параççĕ.

Пурлăх тĕлĕшпе налук çăмăллăхĕсемпе çаксем усă курайраççĕ: Совет Союзĕн Геройĕсем, Раççей Федерацийĕн Геройĕсем, Мухтав орденĕн тулли кавалерĕсем, инвалидсем, пенсионерсем, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин участникĕсем, çĕр-шыв интересĕсене хӳтĕлесе вăл е ку çар операцине хутшăннисем, партизан пулнисем, Чернобылецсем.

Транспорт налукĕпе çăмăллăхсем Совет Союзĕн Геройĕсене, Раççей Федерацийĕн Геройĕсене, Мухтав орденĕн тулли кавалерĕсене, инвалидсене тата Чернобылецсене пырса тивеççĕ.

Çĕр налукĕпе пăхнă çăмăллăхсемпе Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсемпе инваличĕсем усă курайраççĕ.

Тепĕр хут аса илтеретĕп. Вăл е ку налук тĕлĕшпе çăмăллăхсем пуррипе вырăнти налук инспекцийĕнче тĕплĕнрех паллашма пулать.

**С. БЕЛОВА,**
**Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 8-мĕш номерлĕ налук инспекцийĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

# Яваплăх пирки ан манăр!

«Мăкăнь» операци

«Мăкăнь» ятпа иртекен ятарлă операци майăн 27-мĕшĕнче пуçланчĕ. Çак операци наркотиксемпе тăвакан саккунсăр суту-илӳ çаврăнăшне хирĕç кĕрешес, наркотик шутланакан ӳсен-тăрана саккунсăр майпа акса ӳстернине тупса палăртас тата ăна пĕтерес, йĕркене пăсакансене явап тыттарас тĕллевпе иртет.

Мăкăне аслă ăрурисем чечек теме те хăнăхнă, анчах та ăна ӳстерекенсене административлă майпа айăпласси пирки те аса илтерес килет. РФ административлă право нормисене пăснин кодексĕн 10.5 статйинче шăпах çакăн пирки çырса панă. Наркотик шутланакан ӳсен-тăрана çын кăкласа пăрахмасть пулсан ăна 1500–2000 тенкĕ штраф пама саккунлă право пур, должноçри çынсене – 3000–4000 тенкĕ чухлĕ, пурлăх тытакан, хăй халлĕн ĕçлекенсене – 30000–40000 тенкĕ чухлĕ.

10.5.1 пайра вара наркотик е психотроплă вещество пур ӳсен-тăрана акса туса илнĕшĕн, ку ĕç уголовлă яваппа çыхăнман пулсан административлă явап тыттармаллине палăртнă: 1500–4000 тенкĕ штраф е 15 талăк таран арест; юридици сăпачĕллисене – 100000–300000 тенкĕ таран штраф пама ирĕк пур.

Наркотика саккунсăр майпа туянни, ăна упрани, вырăнтан вырăна куçарни те йĕркене пăсниех шутланать. Çапла вара УК 228 статйипе килĕшӳллĕн çакăн йышши преступленисем тунăшăн явап кĕтет. Наркотиксемпе усă курма ятарлă вырăнсем (притон теççĕ вĕсене) тытса тăракансене те, унта ушкăнсемпе наркотикпа усă куракансене те саккун тăрăх ирĕкрен хăтарма право пур: тытса тăракансене – 4 çулччен ирĕкрен хăтарасси, усă куракансене – 3–7 çуллăх ирĕкрен хăтарасси.

Тепĕр асăрхаттарăва та палăртмалла. Наркотик хутăшĕсене медицина тĕлĕшĕнчи кăтартусемсĕр йышăннăшăн та административлă явап кĕтет – 4000–5000 тенкĕ штраф е 15 талăк таран арест. Кун пирки РФ административлă право нормисене пăснин 6.9 статйинче палăртнă.

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

Суд приставĕсем тата чрезвычайлă лару-тăру

# Вĕрентӳре кашни утăм шутра пулчĕ

Çу уйăхĕн 14-мĕшĕ. 14 сехет. Муркаш район судĕнче черетлĕ ĕç кунĕ пырать. Кашни суд ларăвĕнчех вăл е ку çын тунă преступление пăхса тухса суд тивĕçлĕ приговор кăларать. Кама килĕшет вăл, кама – çук. Анчах саккун умĕнче пурте тан пулнăран обществăри йĕркелĕхе пăсаканăн та саккунпа килĕшӳллĕн явап тытма тивет.



Акă палăртнă кун ирттернĕ вĕрентӳре «тунă йышăнупа килĕшмен пĕр арçын» суд çуртне пырса кĕрсе малалла иртме шутларĕ. Унăн çулне суд приставĕ пӳлчĕ. Кĕске тытăçура йĕрке пăсакана приставсем тытса чарчĕç, йĕрке хуралçисене чĕнсе илсе ăна вĕсен аллине пачĕç...

Анчах вĕрентӳ çакăнпа вĕçленмерĕ. Палăртнă вăхăтра судра ĕçлекенсем пĕр пӳлĕмре «пушар тухни пирки» пĕлчĕç. Нимĕн шутласа тăмасăрах вĕсем районти пушар чаçĕпе çыхăнчĕç. Приставсем кĕске вăхăтрах судра ĕçлекенсене çуртран эвакуацилерĕç. Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕнче службăра тăракансем кĕске вăхăтра вырăна пырса çитни те пысăк инкекрен пăрăнса иртме май пачĕ. Пушарнăйсем «инкек» пулнă вырăна кĕрсе раци çыхăнăвĕнче унта хăрушлăха лекнĕ çынсем çуккине пĕлтерчĕç (**сăн ӳкерчĕкре**), вăхăтлă ĕçлесе «ирĕке кайнă» вут-кăвара сарăлма памарĕç.

Тĕрĕслев çакна кăтартса пачĕ: суд приставĕсен хăйсен умне лартнă тĕллевсене ответлăха туйса кирек епле лару-тăрура та пурнăçлама хатĕр. Вĕсем ытти службăсемпе тăтăш çыхăнура пулни те вĕрентӳре туллин курăнчĕ.

– Вĕрентĕве эсир питĕ ăста йĕркеленĕ. Чрезвычайлă лару-тăрура хăйсем мĕн тума пултарнине Муркашсем, ман шутпа, чи çӳллĕ шайра кăтартрĕç. Районти ответлă специалистсемпе тĕрлĕ ведомствăсен пуçлăхĕсем те пĕр çыхăнура пулчĕç, – терĕ Федераллă суд приставĕсен Чăваш Республикинчи управленийĕн специалисчĕ А. Львов.

Пысăк хак тимлĕхе ӳстерме çеç ыйтать.

**А. БЕЛОВ.**

# 9 кун пек вĕçсе иртрĕ 90 çул...



Вăхăт сисĕнмесĕрех иртет иккен. «Хам 90 çула çитнине те сисмерĕм», – тет Мăн Токшикра пурăнакан З. Григорьева та. Çак сумлă юбилея Зоя Ефимовна нумаях пулмасть паллă турĕ. Çав ятпа ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев саламларĕ. Ростислав Николаевич юбиляра малтан РФ Президенчĕн салам открыткине пачĕ. Унтан район администрацийĕн Тав çырăвĕпе, асăнмалăх парнепе тата чечек çыххипе чыс турĕ.

– Эсир вăрçă вăхăтĕнче Аслă Çĕнтерĕве çывхартассишĕн кунне-çĕрне пĕлмесĕр тăрăшнă. Вăрçă хыççăн вара юхăннă халăх хуçалăхне ура çине тăратассишĕн тимленĕ. Эсир район аталанăвне çав тери пысăк тӳпе хывнă. Тавах сире çакăншăн – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ.

Пурнăçĕ Зоя Ефимовнăн чăннипех те çăмăл пулман.

– Вăхăчĕ çапла пулчĕ çав, – ассăн сывлать паян кинеми.

18 çула та çитеймен хĕре вăрçă пуçлансан тӳрех окопсем чавнă çĕре янă. Вăрçă вăхăтĕнче вăрман каснисене, Канаша тырă леçме çӳренисене аса илсен Зоя Ефимовнăн паян та чунĕ çӳçенет. Çăпати сивĕпе шăкăр-шăкăрт шăнса ларса урисем ним туйми хытса ларнисем мĕн чуль пулнă тата. Чăтнă вĕт, тӳснĕ. Каярахпа Зоя пахча çимĕç комбинатĕнче ĕçленĕ. Пултарулла хĕре мастер пулма шаннă.

Колхозра вăл питти арçынсем юлманнипе Зойăн пиччĕшне вăрçа тӳрех илсе каймарĕç. Счетовод кирлĕ çке хуçалăхра. Кĕç-вĕç хăйĕн те салтак ячĕ тухасса пĕлсе, пиччĕшĕ йăмăкне счетовода вĕренме сĕнчĕ, пулăшрĕ. Пиччĕшĕ вăрçа кайсан ун вырăнне Зоя йышăнчĕ, кладовщика та ĕçлерĕ. Анчах кĕтсе илеймерĕ хĕр вăрçăран хăйĕн çывăх тăванне.

Вăрçă хыççăн пĕр ялти Г. Григорьевпа пĕрлешрĕ. Иккĕшĕ те хуçалăхра ĕçлерĕç. Мăшăрĕ каярахпа бригадира вырнаçрĕ. 6 ача вĕсен иккĕшĕн. Анчах та Григорий Григорьевич ватăличчен пурăнаймарĕ. 55 çултах вилчĕ. Вăрçăра аманнисем, тыткăнра нуша курнисем сывлăха самаях хавшатнă çав. Ачисене пĕччененех çитĕнтерчĕ Зоя Ефимовна. Аслисем амăшĕн тĕрекĕ пулчĕç. «Пичисем пулнипе эпĕ атте час вилнине те сисмен. Вĕсем мана пулăшатчĕç. Нихçан та кӳрентермен», – тет Зоя Ефимовнăн кĕçĕн хĕрĕ, паян Муркаш райповĕнче ĕçлекен Валентина Афанасьева.

– Ман ачасем лайăх пулчĕç. Çавăнпа çак таранччен пурăнтăм ĕнтĕ, – савăнăç куççульне пытараймасть кинеми. Хĕрĕ Валентина Григорьевна вара ашшĕне амăшĕ пирки çапла калать:

– Пысăк çынсем пулман пирĕн аттепе анне. Чунĕпе вара вĕсем питĕ пысăкчĕ. Вĕсем питĕ ырă кăмăллă, – çакăн пек сăмахсене ачисенчен илтни амăшĕшĕн чăннипех те телей мар-и вара?

Эппин, Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи В. Аникина каланă пек, çумра яланах çывăх çынсем пулччăр. Вĕсен ăшши амăшĕн ватлăхне канлĕх кӳтĕр.

Паян Зоя Ефимовнăн 11 мăнукпа мăнукĕсен 8 ачи савăнăç парнелеççĕ ăна. Иртнĕ çулсенче çум та çумлаттăм. Халь ал-ура ыратни канăç памасть. Куç та витĕр курми пулчĕ тет кинеми.

Ывăлĕ вăхăтсăр вилнĕ хыççăн сывлăхĕ тӳрех хавшарĕ çав унăн. Амăшĕн чĕришĕн кунтан йывăр хуйхă пур-и вара?

Çывăх çыннисем вара юратаççĕ З. Григорьевăна. Ял халăхĕ ăна хисеплет. Турай ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Павлов та вăл ятла ырă ятлă пулнине палăртрĕ. Юбилейпа саламласа асăнмалăх парне пачĕ.

Зоя Ефимовна «Тăванлăх» халăх фольклор артисчĕсемпе пĕрле ĕлĕкхи юрăсене юрласа чунне уçрĕ. Вĕсемпе ташласа та пăхрĕ.

Ку çеç те мар. 90 çулхи З. Григорьева хăй çырнă сăмахсемпе юрласа та пачĕ пире. Унти хăш-пĕр вырăнсемпе паллашар-ха.

Çӳлти çутă çăлтăрĕсем
Тенкĕ пулса анас çук.
Иртсе кайнă яш ĕмĕрне
Тин каялла тав(ă)рас çук.
Ик чӳрече, ай, хушшине
Нихçан курăк шăтас çук.
Пĕрре куç хупса тухса кайсан
Нихăçан урăх кураяс çук.

Зоя Григорьева шăрçаланă çак йĕркесем пурнăçа юратмалли, хакламалли çинчен аса илтерессĕ пире. Ун сăмахĕсене асра тытса пурăнар та Зоя Ефимовнăна вăрăм кун-çул сунар.

– Кун пек чыс тăвасса шутламанччĕ. Тавах сире, – тесе ăсатрĕ кинеми хăнасене. Вĕсене те хăй пекех вăрăм ĕмĕр сунчĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

# Техосмотршăн мĕн чухлĕ тӳлĕпĕр?

Водительсем валли

Чăваш Республикинчи конкурентлă политикăпа тарифсен патшалăх служби 2013 çулта юридици вăйĕнчи çынсемпе уйрăм предпринимательсен обязательство нормисемпе требованийĕсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслет. Çакă вăл автотранспорт хатĕрĕсене техосмотр тăратнăшăн пуçтаракан укçа-тенкĕ виçипе çыхăннă.

ЧР Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе транспорт хатĕрĕсене техосмотр тăратнăшăн тӳлемелли виçе транспорт хатĕрĕсен категорине кура çак суммăран иртмелле мар (тенкĕпе):

| | |
|---|---|
| М1– | 380; |
| М2– | 680; |
| М3– | 820; |
| N1– | 400; |
| N2– | 800; |
| N3– | 860; |
| 01, 02 – | 320; |
| 03, 04 – | 560; |
| L – | 130. |

М2 тата М3 категорисене кĕрекен транспорт хатĕрĕсен техосмотрĕн чи пысăк виçисем хулари тата кунти электрически транспортне пырса тивмеççĕ. Вĕсене техосмотр тăратасси кунта 631 тенкĕрен иртмелле мар.

Техосмотр дубликатне илмелли виçе 54 тенкĕрен иртме пултараймасть.

Нормăсене пăсакансене пысăк штрафсем кĕтеççĕ, çак ĕçсене пурнăçлама вăхăтлăх чарма та пултараççĕ.

**Чăваш Республикинчи конкурентлă политикăпа тарифсен патшалăх служби.**

# Савăнăç парнелеççĕ, культурăна аталантараççĕ

Пултарулăх ушкăнĕсем районта сахал мар. Чăваш халăх культурипе йăли-йĕркине упраса хăварассипе, сарассипе вĕсем чăннипех те пысăк ĕç туса ирттереççĕ. Ку пархатарлă та пĕлтерĕшлĕ ĕçе шкул çулĕсенченех кӳлĕнекенсене вара уйрăмах ырăпа палăртмалла. Çакăн пек коллективсенчен пĕри тесе çирĕплетсех калама пулать Москакассинчи вăтам шкул çумĕнче йĕркеленĕ халăх ташшин «Калинка» ансамблĕ пирки.

Майăн 18-мĕшĕнче Москакассинче «Ташă кунне» ирттерчĕç. «Калинка» ансамбль пухăннисене Москакассинчи культура центрĕнче хăйĕн пултарулăхĕпе тепĕр хут савăнтарчĕ те, тĕлĕнтерчĕ те.

Ансамбле 1994 çулта йĕркеленĕ. Унăн ертӳçи – Ирина Васильевна Петрова. Çак тапхăрти аталану çулĕ çинче ансамблĕн çитĕнĕвĕсем пĕчĕк мар. Ансамбль çулленех районти, республикăри конкурссене активлă хутшăнать. 2009 çултан тытăнса вара пĕтĕм Раççей тата тĕнче шайĕнчи конкурссене те хутшăнма тытăннă. Ансамбль – Пĕтĕм Раççейри 4 конкурс лауреачĕ, Пĕтĕм тĕнчери 7 конкурс лауреачĕ тата дипломанчĕ.

Çак пултарулăх ушкăнне ачасене тĕрлĕ енлĕ аталанма лайăхрах майсем туса парас тесе йĕркеленĕ. Коллектив виçĕ ушкăна пĕрлештерет. Пур ӳсĕмри вĕренекен те асăннă коллектива хаваспах çӳреме пултарать. Чи пĕчĕккисен хăйсен ушкăн. Унта 1-мĕшĕнчен тытăнса 4-мĕш классенче вĕренекенсем çӳреççĕ. Вăтам ушкăнра 5-мĕшĕнчен тытăнса 8-мĕш класа çитичченхисем. 9 – 11-мĕш классене çӳрекенсене аслисен ушкăнне кĕртнĕ. Сăмах май кунта ансамбле йĕркеленĕренпех çӳрекенсем те çук мар. Ку ушкăнрисем – 18 çултан аслăраххисем.

Ансамбль ертӳçи Ирина Васильевна пирки уйрăм сăмах. Чăннипех те пултаруллă ĕçчен, нимĕн те калаймăн. Пĕрремĕш кунран тытăнсах ĕçлет вăл коллективпа. Вăл – хушма пĕлӳ паракан 1-мĕш категориллĕ педагог. Эпир ку е вăл ташăна сцена çинче пăхса савăнатпăр. Анчах та кам пĕлетши çак пĕр ташăна кăна «пурнăç панелессишĕн», сцена çине кăларассишĕн мĕн чухлĕ тертленмелли, вăй хумалли пирки?

Ташăсене вĕренме шкулта ятарлă пӳлĕм уйăрса панă. Ăна хăт кĕртнĕ, кирлĕ хатĕрсемпе тивĕçтернĕ. Тĕрлĕ костюмсемсĕр те май çук. Çĕнĕрен çĕнĕ ташăсене вĕреннĕ, репертуара пуянлатса пынă чух костюмĕсем те тĕрли кирлĕ. Çакă вара пĕтĕмпех укçатенкĕ ыйтăвĕпе çыхăннă. Юрать-ха Москакасси тăрăхĕнче укçа-тенкĕпе пулăшакансем, спонсорсем пур. Вĕсем пулăшнипех ĕнтĕ ташă-юрă ăстисем шкул ачисем умĕнче те концертсем кăтартаççĕ, ял çыннисене, районта пурăнакансене, тĕрлĕрен предприятисемпе организацисенче ĕçлекенсене те хăйсен пултарулăхĕпе савăнтараççĕ. Ăстасем юрă-ташă урлă чăваш наци культурин традицийĕсене упрама, хаклама вĕрентеççĕ.

«Калинкăна» йĕркеленĕренпе кăçал 19 çул çитрĕ. Мĕн чухлĕ ташă-юрă, концерт программи хатĕрлесе халăх умне кăларман пулĕ çак тапхăрта? Çакă вăл пĕтĕмпех тĕллевлĕн, çине тăрса ĕçлесе пынипе çыхăннă.

Çавна та каласа хăварни вырăнлă. Ансамбле унччен çӳренисене тата халĕ çӳрекенсене пĕрле шутлас пулсан хисеп пĕр пинрен те иртет пулĕ. Хăшĕсем вара шкултан вĕренсе тухса кайнă хыççăн та ташă-юрăсăр пурăнаймаççĕ, çак профиле суйласа илсе пĕлĕве малалла пухма кăмăл тăваççĕ.

Концертсенче зал яланах тулли. Ку вăл ăнсăртран мар. Апла пулсан концерт программисем çынсене килĕшеççĕ, вĕсем репертуара килĕштереççĕ. Халăхсем хушшинчи фестивальсенче, Раççей фестивалĕсемпе конкурсĕсенче «Калинка» ят яланах çӳлте. Вĕсем е çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçеççĕ, е лауреатсем пулса тăраççĕ.

Ансамблĕн пухмачĕ пуян. Дипломсемпе грамотăсем район администрацийĕн вĕрентӳ тата çамрăксен политикин пайĕ панинчен тытăнса республикăра ташă конкурсĕсемпе фестивалĕсенче çĕнтернисене çирĕплетекеннисем таранах. Акă вĕсенчен пĕлтерĕшлĕреххисем кăна. 2009 çулта – Пĕтĕм Раççейри «Золотая осень» конкурс фестивалĕн 2-мĕш степень лауреачĕсем (Шупашкарта иртнĕ), 2010 çулта – Ачасемпе çамрăксен пултарулăхĕн Пĕтĕм тĕнчери «Весенние выкрутасы» конкурс фестивалĕн 1-мĕш степень дипломĕ, Пĕтĕм тĕнчери «Виктория» конкурс фестивалĕн 1-мĕш степень дипломĕ (Хусанта иртнĕ), 2011 çулта – Пĕтĕм Раççейри ачасемпе çамрăксен «Рождественская сказка» пултарулăх конкурс фестивалĕн (Чулхула) тата Пĕтĕм тĕнчери «Виктория» иккĕмĕш конкурс фестивалĕн (Хусан) 3-мĕш степень дипломĕсем, Пĕтĕм тĕнчери «Созвездие талантов» вокалпа хореографи конкурс фестивалĕн 2-мĕш степень дипломĕ, 2012 çулта – Пĕтĕм Раççейри «Золотая осень» конкурсăн лауреачĕн 2-мĕш степень дипломĕ.

Кăçалхи ӳсĕмсем «Калинка» ансамблĕн çӳпçине татах пуянлатрĕç. Апрель уйăхĕнче Пĕтĕм тĕнчери «Виктория» конкурс фестивалĕн (Хусан) 2-мĕш степень дипломне тивĕçнĕ, Пĕтĕм тĕнчери «Национальное достояние» конкурс дипломанчĕсем пулса тăнă.

Ансамбль 2008 çулта тĕслĕх коллектив ятне илме тивĕçнĕ. Ку ята вăл алăран вĕçертме шутламасть. Унăн ĕмĕчĕсем, малашлăх планĕсем питех те пысăк. Вăл хăй темĕнле условисенче те ĕçлеме, пурăнма, çитĕнӳсем тума пултарнине кăтартса парать. Ку тĕлĕшпе нимĕнле иккĕленӳ те çук.

«Калинка» ансамбль çĕр-шыв тулашĕнче пулса та хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарма ĕлкĕрнĕ. 2011 çулта коллектив Дагестанра пулнă, Пензăна, Волгограда, Махачкалана, Дербента, Кизляра, Буйнакска тата ытти нумай вырăнсене çитме ĕлкĕрнĕ. Пĕлтĕр «Калинкăна» Горноалтайскра, Пушкăртстанра, Аркаимра, Билярскра, Булгарта хаваспах йышăннă. 2012 çултах Молдовие, Гагаузие çитсе те ташă-юрăпа савăнтарнă. Кăçал та кун пек гастрольсем йĕркелеме пăхса хунă.

Мĕн-ха вăл талант, пултарулăх тесе ыйтсан çакăн пек хурав пани аса килет. Ку вăл пĕр процент çут çанталăк пани тата 99 процент çине тăрса ĕçлени. Москакассисен пĕр проценчĕ те, 99 проценчĕ те пур тейĕпĕр. Çапах та хальхи вăхăтра çак пултарулăха аталантарма, талантсене çул пама спонсорсен, ырă чунлă ытти çынсен пулăшăвĕсĕр те май çук. Телее кун пеккисем вара «Калинкăн» çук мар. «Ташă кунĕнче» вĕсене ятранах асăнса тав сăмахĕ каларĕç. Ансамбль ӳсĕмĕсенче Инга Петровна Терентьевăн, ыттисен тӳпи те пĕчĕк мар.

Хитре, илĕртӳллĕ костюмсем çĕлесе хатĕрлемесĕр те май çук. Ушкăнсем валли Наталья Савинкина, Елена Андреева, Олеся Поркина çĕвĕçсем хатĕрленĕ костюмсен илĕртӳлĕхне те курса киленме пултарчĕç уява пухăннисем.

Ансамбль коллективĕн ӳсĕмĕсем чăннипех те пысăк. Апла пулин те вĕсем тунă çитĕнӳсемпе кăна лăпланса пурăнма шухăшламаççĕ. Малашлăх планĕсемпе тĕллевĕсем татах та анлăрах. Çапах та вĕсене пурнăçлама шанчăк çирĕп.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкĕсем авторăн.**

«Калинка» ансамбль





# Саккун уççăнрах сывлама май парать

## Пирус туртнине хирĕç

Пирус туртнин сиенĕ пирки, вăл туртакан çыннăн сывлăхĕшĕн кăна мар, юнашаррисен сывлăхĕшĕн те хăрушлăх кăларса тăратни пирки нумай калатпăр ĕнтĕ. Çул çитменнисен прависене хӳтĕлекен тата вĕсемпе ĕçлекен районти комисси ларăвĕсем те çамрăксене çак йăлана пăрахма ыйтнисĕр иртмеççĕ. Пирус туртнин хăрушлăхне кашниех куç умне туллин кăлараймасть пулĕ, патшалăх вара малалла пăхать: паянтанпа «Об охране здоровья граждан от воздействия окружающего табачного дыма и последствий потребления табака» Федераллă саккунăн хăш-пĕр пайĕсем вăя кĕчĕç.

Пирус туртнине чикĕлеме тивĕçлĕ саккун обществăлла вырăнсенче туртма чарать. Ĕç вырăнĕнче, вĕренӳ, культура, сывлăх сыхлавĕн тата хăш-пĕр спорт сооруженийĕсенче пирус туртма маларах чарнăччĕ, халĕ вара – вĕсен территорийĕнче те. Чукун çул тата автовокзалсенче, юхан шыв, тинĕс тата аэропортсенче, метрополитен станцийĕсенче, çавăн пекех унта кĕмелли алăксенчен 15 метртан çывăхра пирус туртма юрамасть. Самолетсенче, вĕсен вĕçев вăхăчĕ мĕн чухлĕ тăсăлнине пăхмасăр, пачах та туртма юрамасть.

Пирус туртма юраман вырăнсем шутне ача-пăча площадкисемпе пляжсем, лифтсем, нумай хваттерлĕ çуртсенчи пурте усă куракан вырăнсем те кĕреççĕ. Автозаправкăсенче туртмалла маррине те халĕ саккунпах çирĕплетнĕ.

Маларах пирус рекламăлассине реклама çинчен калакан саккун кăна тĕрĕслесе тăнă. Вăл телевиденипе, радиопа, хаçатсемпе журналсен пĕрремĕш страницисенче тата реклама щичĕсем çинче пирус изделийĕсене рекламăлассине чарнă. Июнĕн 1-мĕшĕнчен пирус рекламăлани пачах та пулмалла мар, пирус изделине кăларакан пĕр-пĕр уявăн спонсорĕ пулнине те кăтартма юрамасть. Пирус туса кăларакансен ыр кăмăллăх мероприятийĕсенче те хăйсен фирма паллисене тата тавар паллине рекламăлама юрамасть.

Малашне пируса халăх хушшинче тӳлевсĕр салатма, вăл шутра парне вырăнне пама май паракан мероприятисене те ирттерме юрамасть, çавăн пекех асăннă саккун пирус изделийĕсене туянма тӳррĕн е тӳррĕн мар хистекен мероприятисене (лотерея, тĕрлĕ конкурссем) ирттерме те чарать. Пирусăн хакне йӳнетсе, вăл шутра купон-талонсемпе усă курса сутма та ирĕк пулмĕ.

Суту-илӳре пируса аса илтерекен япаласем те пулмалла мар. Сăмахран, пирус формăллă жвачкăсем е канфетсем. Электрон пируссем те чару шутне кĕреççĕ. Пирус изделийĕсен тавар паллисене усă курса хатĕрленĕ япаласем – футболкăсем, карттуссем, зажигалкăсем, ручкăсем – саккунпа килĕшсе тăмаççĕ.

Пирус изделийĕсене сутассине ку таранччен чикĕленĕччĕ. Вĕсене сывлăх сыхлавĕн, культура, физкультурăпа спорт тата вĕренӳ учрежденийĕсенче (вĕренӳ учрежденийĕсенчен 100 метр радиусран çывăхра сутмалла марри те) сутма чарнăччĕ. Çавăн пекех çул çитменнисене пирус сутма, упаковкăна тултарман табака тата пируса автоматпа усă курса штукпа та сутма юраман. Ку вăйрах юлать. Çакăнпа пĕрлех малашне патшалăх учрежденийĕсенче тата хулапа хула çум транспорт хатĕрĕсенче те пируспа суту-илӳ тума чарать. Насвайпа суту-илӳ тăма чарнине те саккунпа çирĕплетнĕ.

Пирус туртакансен мĕн тумалла-ха? Пирус туртнăшăн штраф тӳлес мар тесен вĕсен усă сывлăшра уйăрнă ятарлă вырăнсене е вентиляци системине вырнаçтарнă пурте усă куракан пӳлĕмсене шырама тивет. Майĕпен туртма пăрахсан тата лайăхрах пулмалла, мĕншĕн тесен асăннă саккунăн ытти пайĕсем тапхăрăн-тапхăрăн вăя кĕрсе пырĕç, йĕркене татах та çирĕплетĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Полици хроникинчен 12+

### Кукăр алăн куçĕ те «кукăр»

Кукăр алăн куçĕ те «кукăр» курать тейĕн – ют япалана вăрласа пуясшăн вăл. Акă иртнĕ кунсенче çакăн пек правурскер Мулкачкассинчи пĕр хуçалăхран 18 пин тенкĕ тăракан мотокультиватор тата электроплита вăрласа тухнă. Кĕтмен çĕртен тупăннă япаласемпе мĕн тума шухăшланă-ши вăл? Çакна следстви татса парĕ, анчах та вăрă хăйĕн шăпи уголовлă кодекспа çыхăннине тавçăрса илеймен курăнать.

**Районти полици пайĕн материалĕ тăрăх хатĕрленĕ.**

## Муркашри хирурги уйрăмĕн сиплевçисене

Хĕвел чунлă ыр сиплевçĕсем,
Сирĕн ятпа çĕн юрă юхтăр!
Сире мухтатăп сăввăмпа –
Ялан-ялан эсир ман асăмра.
Чир-чĕрсенчен мана эсир чĕртрĕр,
Çĕн пурнăç керменне шеп кĕртрĕр,
Эсир парнелерĕр çĕн телей,
Сыхларăр чун-пил ăшшипеле.
Пурнатăп эпĕ, савăнатăп,
Çут шевле евĕр çуталатăп,
Хĕвел тĕнчин ытамĕнче
Чунпа юрлатăп сирн çинчен.
Хĕвеллĕ чунлă ыр сиплевçĕсем,
Сирĕн ятпа хĕвел шав тухтăр,
Мĕн пур чунтан тавах сире,
Мĕн пур çынран тавах сире.

**К. ПОТЯНОВА.**

# «Моргауши-Согласие» кредит кооперативĕ 10 çулта

**Муркаш районĕнче «Моргауши-Согласие» кредит кооперативĕ 2003 çулта йĕркеленчĕ, çав тапхăртан пуçласа вăл ăнăçлă ĕçлет, çынсен ыйтăвне туллин тивĕçтерет. Ăна Ф. Кирпичникова ертсе пырать. Нумаях пулмасть вара Фаина Валентиновна пире черетлĕ çитĕнӳсемпе савăнтарчĕ. Пултаруллă ертӳçĕне агропромышленность комплексĕн аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн, ял хуçалăх производствинче вăй хуракансене курăмлă пулăшу кӳнĕшĕн Чăваш Республикин ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотипе чысларĕç. Ку çеç те мар, пысăк хисепе тивĕçнĕ ертӳçĕ Муркаш районĕн тата Чăваш Республикин ят-сумне Чулхула облаçĕнче тивĕçлĕ шайра хӳтĕлерĕ. Кунта апрелĕн 25 – 27-мĕшĕсенче «21 ĕмĕрти хĕрарăм-лидер» Пĕтĕм Раççейри иккĕмĕш конкурс иртрĕ. Палăртса хăваратăп, республикăран ку тĕлĕшпе виçĕ хĕрарăм-ертӳçĕ, вăл шутра пирĕн ентеш вăрăм çула тухрĕç. Çапла вара Фаина Валентиновна тăван тăрăха асăннă конкурс çĕнтерӳçи пулса таврăнчĕ.**

**– Конкурса пĕтĕмлетнĕ май Чулхула облаçĕн кĕпернаттăрĕ В. Шанцев Хĕрарăм-ертӳçĕсен ассоциацийĕн президенчĕ Л. Хохлачева алă пуснă диплома тата медале парса чысларĕ, – терĕ Ф. Кирпичникова. Çавăн пекех пултарулăха Чулхула облаçĕн предпринимательство ĕçĕсен министрĕ Д. Лабуза алă пуснă Тав çырăвĕ те хаклать.**

**Апрель уйăхĕнче вара кредит кооперативĕ 10 çул тултарчĕ. Çавна май эпĕ унăн ертӳçипе Ф. Кирпичниковăпа тĕл пулса калаçрăм. Акă мĕн пĕлтерчĕ вăл.**



– Паянхи кун тĕлне кооператив 700 яхăн çынна пĕрлештерет. Кредит кооперативĕн пулăшăвне Муркашра пурăнакансем кăна мар, ялсенчисем те аван туяççĕ. Пирĕн тĕп тĕллев – çынсене кĕске вăхăтра курăмлă пулăшу сĕнесси. Эпир хамăр кооператив членĕсене меллĕ заем илме майсем туса паратпăр, ытти пулăшăва сĕнетпĕр. Пирĕн заем пенсионерсемшĕн, çавăн пекех ял хуçалăхĕнче вăй хуракансемшĕн питĕ меллĕ, вĕсемшĕн уйрăм çăмăллăхсем пур. «Моргауши-Согласие» кооперативăн процент ставкисем ытти кооперативсенчисенчен пĕчĕкрех, çакă клиентсемшĕн илĕртӳллĕ. Уйрăм çын тӳлеслĕхне, тупăшне кура кĕске вăхăтлă çăмăллăхлă условисем сĕнетпĕр. Уйрăм çынсемпе кăна мар, индивидуаллă предпринимательсемпе, хресчен (фермер) хуçалăхĕсемпе те ĕçлетпĕр. Пирĕншĕн «АПК-на аталантарасси» нацпроект пысăк пĕлтерĕшлĕ. Апла пулсан пирĕн çинче пысăк ответлăх. Çынсем пирĕн кредит кооперативĕн пулăшăвĕпе кулленхи мĕн пур йывăрлăха татса пама усă кураççĕ. «Моргауши-Согласие» кредит кооперативĕ ăнăçлă аталанса пырать, çакăнта вара С. Максимова тĕп бухгалтерăн тӳпи пысăк. Эпĕ хамăр клиентсене ăнăçу сунатăп, малашне те пĕрпĕринпе килĕштерсе ĕçлессе шанатăп.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

Сывлăх

## Юн парса пулăшма

Чирлисене юн парса пулăшасси яланах пархатарлă ĕç шутланнă. Çавăнпа та кăçал çулталăк пуçламăшĕнче юн панăшăн укçа тӳлемелле маррине те саккунпа пăхса хунăччĕ, анчах та нумаях пулмасть РФ сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин ятарлă хушăвĕпе ăна пăрахăçларĕç. Çапла май малашне те юн панăшăн укçа тӳлесси вăйра пулать.

Пĕтĕм тĕнчери сывлăх сыхлав организацийĕн тĕпчевĕсем донорсем ыттисенчен вăтамран 5 çул нумайрах пурăннине çирĕплетеççĕ. Унăн сăлтавĕ – çĕнĕ юн туса кăларма организмри чылай клетка çĕнелнинче. Çапла вара организмăн иммунитечĕ те тăтăшах çĕнĕ вăй илсе тăрать. Апла пулсан пархатарлă ĕç туни хамăршăнах усăллă.

Çитес кунсенче пирĕн районта та донор кунĕсем иртеççĕ. Унăн графикĕ паллă: Йӳçкассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕнче – июнĕн 4-мĕшĕнче, Нискассинчи офисра – июнĕн 11-мĕшĕнче, Москакассинчи офисра – июнĕн 13-мĕшĕнче, Турайри офисра – июнĕн 18-мĕшĕнче, Шетмĕпуçĕнчи офисра – июнĕн 19-мĕшĕнче, Ярапайкассинчи офисра – июнĕн 20-мĕшĕнче, Юнкăри офисра – июнĕн 25-мĕшĕнче, 2 номерлĕ район больницинче – июнĕн 26-мĕшĕнче, Муркашри тĕп больницăра – июнĕн 27-мĕшĕнче.

Юн паракансен çумра паспорт пулмалла. Юн панă кун донорсене апатланма 120 тенкĕ компенсаци параççĕ, гемотрансмиссивлă инфекцисенчен тĕрĕслеççĕ. Кунсăр пуçне çак кун ĕçрен хăтармалли (уншăн ĕç укçине тӳлеççĕ) справкăпа тивĕçтереççĕ. Донорăн тата тепĕр кун кану кунĕ илме право пур (Ĕç кодексĕпе килĕшӳллĕн). Ăна вăл юн панă хыççăнхи тапхăрта отпуск çумне хуштарса е урăх вăхăтра илме пултарать.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Ĕçпе тивĕçтерекен служба

## Сочире ĕçлес килет-и?

Июнĕн 11-мĕшĕнче Шупашкарта, Трактор тăвакансен керменĕнче, 11 сехетре республикăри вакансисен ярмăрки пуçланать. Вăл Сочире хĕллехи Олимп вăййисене ирттерме персонал пухассипе çыхăннă. Унта Сочире Олимпиада вăхăтĕнче ĕç тупас текенсене (акăлчан чĕлхине пĕлнине ырлаççĕ) пурне те йыхравлаççĕ.

«Сочи – 2014» йĕркелӳ комитечĕ, Олимпиада вăхăтĕнче вăхăтлăх ĕçпе тивĕçтерекен официаллă компани «Адекко» тата Чăваш Енĕн ĕçпе тивĕçтерекен служби Олимп тата Паралимп вăййисем вăхăтĕнче ĕçлемешкĕн вакансисем уçнине пĕлтернĕ.

Вакансисен тĕп енĕсем çаксемпе çыхăннă:

Транспорт (водительсем, парковщиксем, транспорт менеджерĕсем), логистика (склад., логистсем, складра ĕçлекенсем, погрузчик водителĕсем), информаци технологийĕсем (ИТ, Телеком специалисчĕсем), сервис (объектсене тата Олимпиада ялне пăхса тăрасси), апатлану йĕркелесси (апатлану точкисен управляющийĕсем, сервис персоналĕ), ĕç специальноçĕсем, спортпа çыхăннă хăйне евĕр позицисем тата ытти те.

Пурĕ 200 ытла ваканси сĕнеççĕ, вĕсем пĕри те строительствăпа çыхăнман. Вăхăтлăх ĕçлеме каякансене меллĕ условисем туса параççĕ.

Пур ыйтупа та Муркашри ĕçпе тивĕçтерекен центра шăнкăравлама (62-1-66) е кĕрсе тухма пултаратăр. Чăваш Енри ĕçпе тивĕçтерекен службăн телефон номерĕ: 8(8352)57-14-74.

**И. ДИМИТРИЕВА,**
**ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи.**

Объявления




* * *

ПРОДАЮ: комбайн СК-5 – Нива; пресс-подборщик ПРФ-180. Тел.: 8-937-958-51-14. 1-5.

* * *

Пĕр çул та виçĕ уйăхри хура-шурă тынашки сутатпăр. Тел.: 8-987-666-74-23.

* * *

Продаю ВАЗ-2111, серебристый универсал, 2002 года выпуска, пробег 113 тыс. км., передние электростеклоподъемники, подогрев сидений, за 110 тыс. руб. Тел.: 8-905-345-39-44.

* * *

Требуются продавцы. Тел.: 8-927-666-93-93, 8-905-199-50-60.

* * *

Куплю однокомнатную квартиру в с. Моргауши. Тел.: 8-927-864-24-41.

* * *

Пĕрре пăруланă хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 67-2-14, 8-987-120-55-98.

* * *

Продаю необрезные ДУБОВЫЕ ДОСКИ разной длины и ширины. Цена договорная. Тел.: 8-937-388-55-16, 8-908-307-07-44.

* * *

4 çулхи мăкла качака сутатăп. Елшик ялĕ. Тел.: 64-7-47.

* * *

Продаю ОПГС (гравмасса), песок. Тел.: 8-905-199-69-33. 1-8.

* * *

Срочно требуется бригада строителей в Московскую область для строительства каркасных и брусовых домов. Тел.: 8-906-130-97-90, 8-937-375-31-51. 1-5.

* * *

Куплю однокомнатную квартиру в с. Моргауши. Тел.: 8-965-681-05-35. 2-2.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:061901:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Блинов Константин Витальевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Большие Татаркасы, ул. Пакшандаева, д. 40.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:061901:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение.

